Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЉ 4 ТУНТИКУН 152 (4965) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать | *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ* | Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Зайома кĕске вăхăтра вырнаçтарса çитерессишĕн кĕрешесси—партипе совет организацисен умĕнче тăракан вирлĕрен те вирлĕ задачă

Йышлă та паха выљăх-чĕрлĕхшĕн

Социалисăмлă йалхуçалăхĕ ÿсce вăйланса, пынипе пĕрлех пирĕн çĕршывра выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те хăвăрт ÿсce пырать. 1934 çултан пуçласа 1938 çула çитиччен республикăра ĕне выљăхсен хисепĕ 23,5 процент, сурăхсемпе качакасем—23,3 процент, сыснасем 62,4 процент хутшăннă.

Социалисăмлă çектăр тăрăх илсен, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн ÿсĕмĕ татах та пысăкрах. Тăвата çул хушшинче колхозсенче çĕнĕрен 319 выљăх-чĕрлĕх ферми организациленĕ. Фермăсенче ĕне выљăхсен хисепĕ 254,7 процент, сурăхсем—20 хут тата сыснасем—172,4 процент ÿснĕ. Колхозсенчи выљăх-чĕрлĕх фермисем урлă тăвата çул хушшинче колхозниксене пурĕ 5632 пăру, 97231 сысна çури туйăнтарнă. Унсăр пуçне тата государствă çăмăллăх парса ĕнесĕр колхозниксене 25.467 пăру туйанма пулăшнă.

Çав ÿсĕмсем вĕсем колхоз стройĕ çĕнтернипе, колхозсемпе колхозниксене государствă пулăшнипе çеç пулма пултарнă. Çав ÿсĕмсем вĕсем колхозниксен пурнăçне лайăхлатнипе пĕрлех, çĕршыва аш, сĕт, çăм ытларах парса тăма пултаракан тăваççĕ.

Пайан епĕр „Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели 1938 çулхи государствă планĕ" çинчен Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленине пичетлесе кăларатпăр. Ку постановлени выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малашне татах анлăн сарса йамали программă пулса тăрать, План тăрăх 1938 çул хушшинче пысăк ÿсĕм пулмала. Колхозсем тăрăх илсен, 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшне лашасен хисепĕ 5,5 процент, ĕнесем—25,5 процент, сурăхсем—17 процент, сыснасем 5,7 процент ÿсмеле.

Çакă ĕнтĕ, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йенĕпе 1938 çулта колхозсем умĕнче пысăк задачă тăнине пĕлтерет. 1938 çулта выљăх-чĕрлĕхсен хисепне ÿстермели плана тултарасси чи малтанах колхозсемпе колхозниксем çамрăк выљăхсене пăхса ÿстермелли плана мĕнле тултарнинчен килет. 1937 çулта республикипе колхозсенче 9,94 пин тыха, 9,69 пин пăру, 6,33 пин путек, 38,59 пин сысна çури ÿстернĕ пулсан, 1938 çулхи план тăрăх 13 пин тыха, 11 пин пăру, 7,5 пин путек, 48 пин сысна çури пăхса ÿстермеле.

Постановлени çинче хăшпĕр районсенчи колхозсенче выљăх хисепĕ чакнине тата çамрăк выљăхсене сахал пăхса ÿстернине кăтартса панă. Уйрăмăнах тыхасене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе ĕç йапăх пырать. Ишлей районĕнче 1937 çул хушшинче лашасен хисепĕ 2,5 процент, Шупашкар районĕнче 0,4 процент, Улатăр районĕнче 0,1 процент чакнă. Çав Улатăр районĕнчех 1937 çулта тыхасене 7,2 процент, пăрусене 22 процент, сысна çурисене 15,1 процент усрамасăр хăварнă. Йетĕрне, Турхан тата Шăнкăртам районĕсенче те çамрăк выљăхсене пăхса ÿстерес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнă.

Хăшпĕр районсенче — Вăрмар, Куславкка, Канаш, Йелчĕк тата Шăнкăртам районĕсенче ĕнесĕр колхозниксене ĕнелĕ туса çитерес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлесе пынă. Çавăн пирки ку районсенче халиччененех ĕнесĕр колхозниксем чылай.

Çав çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермеле. Çавна пĕтерме тата уйрăмах халăх тăшманĕсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă сийенлĕ ĕçсен йулашкийĕсене хăвăрт пĕтерме çĕрĕç работникĕсемпе колхозниксен пĕтĕм вăйне мобилизацилемеле.

Выљăх-чĕрлĕх хисепне ÿстерсе пынипе пĕрлех, выљăхсен ăратне лайăхлатса пырса, выљăх апачĕн никĕсне çирĕплетсе тата ветеринарипе зоотехникă йенчен пулăшассине тĕрĕс организацилесе, выљăхсен продуктивлăхне ÿстересси халљхи вăхăтра тĕп задачă пулса тăнине Халăх Комиссарĕсен Совечĕ уйрăмăнах асăрхаттарать.

1938 çулта колхозсемпе колхозниксен хуçалăхĕнчи выљăхсенчен 144 пин ĕне, 192 пин сурăх тата 46,5 пин сысна метизацилемеле. Республикă тулашĕнчен государствă паха ăратлă 700 вăкăр, 500 сысна аçи, 200 сысна ами кÿрсе килет. Çавсемпе пуринпе те туллин уса курмала.

Халăх тăшманĕсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе сийенлетес тĕлĕшпе уйрăмăнах выљăх апатне сахаллатса пыма тăрăшнă. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă план выљăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе 1938 çул валљи пысăк задачă кăларса тăратать. Кăçал пурĕ 120 пин тоннă çилос хатĕрлемеле, 62 пин гектар çинчен утă çулса кĕртмеле тата улăхсен лаптăкне пысăклатас тĕлĕшпе нумай ĕçсем туса иртермеле.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планĕ йышлă та паха выљăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешме массăна анлăн мобилизацилеме хушать. Плана йăнăçлăн пурнăçа кĕртесси чи малтанах çынсенчен килет.

Пирĕн колхозсенче выљăх-чĕрлĕх маçтăрĕсен, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри стахановĕцсен йышĕ çултан çулах ÿсce пырать. Чылайĕшĕ вĕсенчен хăйсен паха ĕçĕсемпе Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕ пулчĕç. Орденоносĕц Çтепанăв, орденоноскă Григорйĕвă йулташсем тата колхозсенчи фермăсенче ĕçлекен ытти стахановĕцсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хисеп йенчен те, пахалăх йенчен те хăвăрт малала йама май пуррине лайăх кăтартса пачĕç. Акă, тĕслĕхрен, „Сеятель" колхозăн сысна ферминче ĕçлекен Çеменăв Петр иртнĕ çулта сысна аминчен 24-шар çурă ÿстернĕ пулсан, кăçал вăл 26-шар çурă ÿстересшĕн. Кашни фермăн, фермăра ĕçлекен кашни колхозникăн малта пыракансем пек ĕçлемеле. Выљăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçе тĕрĕс организацилесси çине çĕрĕç оргăнĕсем уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхмала.

Государствă планне пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешесси пирĕн çĕршывра выљăх-чĕрлĕх продукцине çителĕклĕ тăвассишĕн, колхозсен тупăшне ÿстерессишĕн, колхозла хресченсен пурнăçне татах пуйанрах та куљтурлăрах тăвассишĕн кĕрешесси пулса тăрать.

Йышлă та паха выљăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешмели плана халех колхозсене тата колхозниксен хуçалăхĕсем патне çитермеле. Ку вăл пит ответлă ĕç. Ăна колхозсемпе колхозниксем патне хăвăрт çитермеле çеç те мар, кашни колхозăн уйрăмлăхне кура, выљăх-чĕрлĕхсен хисепне камăн мĕн чухлĕ ÿстермелине кăтартса памала. Çĕнĕ йĕркене, колхоза панă плана райĕçтăвком президиумĕ çав колхоз председателне чĕнтермесĕр çирĕплетме пултарман йĕркене пăсни ниçта та пулмала мар.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана йăнăçулăн пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешес ĕçре социалисăмлă ăмăртăва анлăн организацилесси, çав ăмăртăва колхозниксен тата йалхуçалăх специалисĕсен пĕтĕм массине хутшăнтарасси—çавă пулать ĕнтĕ парти, совет организацийĕсем тата çĕрĕç оргăнĕсем умĕнче выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йенĕпе тăракан хисеплĕ задачă.

Командировкăрисемпе отпускрисем те халех çыранаççĕ

Ийулĕн 2-мĕшĕнче, ирхине ĕç пуçланиччен, Чăвашсойузра ĕçлекенсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра тухса каланă йулташсем Совет правителстви Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне (пĕрремĕш çулхи кăларăм) кăларасси çинчен йышăннă постановленине ырларĕç. Виçĕ ернери ĕç укçинчен кайа мар çыранма пулса резољуци йышăнчĕç.

Митинг хыççăнах зайом çыранма тытăнчĕç. Шапошникова, Калљаканăв, Федăрăв йулташсем хăйсен уйăхри ĕçукçинчен ытларах çыраннă. Нумай служăшчисем уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыранаççĕ.

Нумай работниксем тĕрлĕ районсенче командировкăра çÿреççĕ тата нумайĕшĕ отпускра каяççĕ. Пĕр служăшчи те çĕнĕ зайома çыранмасăр йуласшăн мар. Сĕнтĕрвăрри районне командировкăна кайнă Красношчекăв (ревизорсен группин руководителĕ) 400 тенкĕлĕх, Çергейĕв (оргпайĕн начальникĕ) 560 тенкĕлĕх çыранма пулса телефон тăрăх пĕлтернĕ. Çавăн пекех отпускрисем те Чăвашсойуза пырса зайом илме çыранаççĕ. Çапла халљхи вăхăтра отпускра пуранакан Майушин 400 тенкĕлĕх, Мизанăвă 300 тенкĕлĕх, Бурашкинăпа Федăрăв уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыраннă.

Зайом çыранассине çак кунсенчех йĕркелесе çитерес майпа Чăвашсойуз çумĕнчи комсол командировкăсенчи тата отпускри работниксемпе телеграфпа толефон тăрăх çыхăнса ĕçлет.

Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне (пĕрремĕш çулхи кăларăм) çыранас ĕçе иртерне çĕре профсойузсем хутшăнасси çинчен

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совет çекретариачĕ йышăннă постановлени

Советлă Социалисăмлă Республикĕсен Сойузĕн правителстви Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне (пĕрремĕш çулхи кăларăм) кăларчĕ.

Çак зайомран пухăнакан укçатенкĕ, ССР Сойуз правителстви кăларнă малтанхи зайомсем пекех, хуçалăхпа куљтурă строителствин нушисем валљи, рабочисемпе хресченсен тĕнчипе пĕрремĕш социалисăмлă государствин оборонă хăватне тĕреклетнĕ çĕре, ĕççыннисен куљтурăлă тăравĕпе материаллă пурнăç условине малала лайăхлатса пынă çĕре кайать.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ сойузсен центрти, облаççенчи (крайсенчи) комитечĕсене тата савăтсенчи комитетсемпе выранти комитетсене пурне те—рабочисем, служăшчисем, инженерсем, техниксем, ăслăлăх работникĕсем, врачсем, учителсем, искусствă работникĕсем тата мĕн пур ĕççыннисем хушшинче зайом сарас ĕçе активлăн хутшăнма хушать.

Зайома çыранасси ирĕклĕн çеç пулмала, ирĕксĕрлесе çырăнтармала мар.

Социалисăм строителствине вăйлатнă çĕрте зайом мĕнле вырăн йышăнса тăнине, зайомсен уссине тата ĕççыннисем зайома çыранма интересленнине анлантарса парса, профсойуз организацисен мĕн пур ĕççыннисем ик-виç ернери ĕçукçи чухлĕ зайом çыранмала тăвас пулать.

Зайома çыраннă вăхăтра малтанхи зайомсен облигацисем вылљаса илнине тĕрĕслемеле.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ мĕн пур профсойуз членĕсене тата профсойуз организацисене—зайома çыранассине патриотисăмăн, Советсен çĕршывĕнчи ĕççыннисем хăйсен социалисăмлă тăван çĕршывне, Ленинăн—Сталинăн коммунисла партине тата пĕтĕм халăхпа суйланă хăйсен правителствине йуратнине кăтартакан политикăлă демонстраци туса хума чĕнет.

Пурте çыранса илетпĕр!

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр, телефонпа). Правителствă çĕнĕ зайом кăларни çинчен хыпар килсенех, „Бољшевик" савăтăн пур цехĕсенче те рабочисен митингĕсем пулчĕç. Митингсенче тухса каланă йулташсем пурте, çавăн пекех митингсенче йышăннă резољуцисенче те правителствă Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне кăларнине ырласа саламларĕç.

— Пурте çыранса илетпĕр! — çакăн пек пулчĕ „Бољшевик" савăтри рабочисен сасси.

Митингсем хыççăнах зайом илме çыранас ĕç пуçланчĕ. Савăтри рабочисемпе инженерлă-техникла работниксем тата служăшчисем пĕр кун хушшинче 40.500 тенкĕлĕх зайом илме çыранчĕç. Зайом илме çыранас ĕç саралсах пырать.

Килхуçи хĕрарăмсем 52 çын зайом илме çыранчĕç.

Савăт цехĕнче зайом тухнă йатпа йатарласах çтена хаçачĕ кăларчĕç.

Иваницкий.

Укçине те çийĕнчех тÿлеççĕ

ШĂНКĂРТАМ, ийулĕн 2-мĕшĕ (телефон тăрăх). Совет правителстви çĕнĕ зайом кăларнă йатпа районри колхозсенче тата район центрĕнчи учрежденисенче митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ.

Нумайĕшĕ митинграх çĕнĕ зайома илме çыранаççĕ. Палтайелĕнче колхозниксем митинг вăхăтĕнчех 1.050 тенкĕлĕх зайом илме çыраннă. Çавăнтах 485 тенкĕ укçа пухнă та. иккĕмĕш Шăнкăртамра 1.500 тенкĕлĕх çыранса, 750 тенкĕ укçа пухнă. „Кзыл Йул" колхоз колхозникĕ Махмутăв йулташ 150 тенкĕлĕх çыранса çав кунах укçине тÿлесе татрĕ. Мутерисăв 140 тенкĕлĕх çыранса 75 тенкĕ укçа тÿлерĕ.

Колхозниксемпе пĕрлех йединоличниксем те зайома хавасланса çыранаççĕ. Вахитăв 100 тенкĕлĕх çыранса укçине çав кунах тÿлесе татрĕ. Зайом илме çыранасси колхозсенче пысăк çĕкленÿпе пырать.

Кужикăв.

Çĕнĕ зайом кăларнине совет халăхĕ пĕр çын пек пулса саламлать

Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне кăларнă йатпа Советсен çĕршывĕнчи хуласемпе йалсенче нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ. Сойузри ĕççыннисем пур çĕрте те çĕнĕ зайома саламлаççĕ.

Орловск облаçĕнчи пăравуссемпе вакунсем тăвакан „Красный профинтерн" савăтри рабочисем митинг хыççăнах çĕнĕ зайома çыранма пуçланă. Ийулĕн 1-мĕшĕнче каçхине тăхăр сехет тĕлнеле çичĕ пин çынна йахăн çыраннă.

Балакăвски МТС-ри (Саратăв облаçĕ) рабочисен митингĕнче резољуци йышăннă, вăл резољуцире çапла каланă: „Правителствă зайом кăларасси çинчен йышăннă постановлени пирĕн шухăшсемпе кăмăлсене—пĕтĕм Совет халăхĕн шухăшĕсемпе кăмăлĕсене кăтартса парать. Вăл пире производствăра çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантарать".

Хусанта Ленин йачĕпе тăракан савăтри рабочисен митингĕнче стахановкă Гайнутдинăвă йулташ çапла каланă:

— Пурнăç куллен кун лайăхрах та телейлĕрех пулса пырать. Пирĕн çĕршывра правителствă тăвакан кашни ĕçех ĕççыннисем чунтан хапăлласа ырлаççĕ. Çĕнĕ зайом кăларни çинчен калакан хыпар пире савăнтарать. Епĕ пуринчен те малтан пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыранатăп.

Ново-Усман районĕнчи (Воронеж облаçĕ) виçĕ йалхуçалăх ертелĕнчи—Сталин йачĕпе, Молотăв йачĕпе тăракан тата „Çамрăк коммунар" ертелсенчи колхозниксем Виççĕмĕш Пилĕк çуллăх Зайомне каларни çинчен радио тăрăх пĕлнĕ. Хиртех митинга пухăнса, вĕсем правителствă постановленине хĕрÿлĕн сÿтсе-йавнă, ăна пĕр çын пек пулса ырланă. Митинг хыççăн зайом çыранма пуçланă Çур сехет хушшинче çав митингра пулнă колхозниксем пурте зайом çыраннă.

Ржищевски районĕнчи (Кийĕв облаçĕ) Шевченко йачĕпе тăракан ертелри саккăрмĕш бригадă колхозникĕсем зайом кăларни çинчен ĕç вăхăтĕнче, сахăр, кашманĕн хирĕнче ĕçленĕ вăхăтра пĕлнĕ. Бригадăри 50 колхозницă çавăнтах митинга пухăннă. Хăйсен бригадирĕ Феодоçийă Гумењук çамах каланă чухне хĕрÿлен алă çупнă вĕсем:

— Епĕ,—тенĕ Гумењук,—хамăн пĕрекетленĕ укçа-тенке савăнсах хамăн тăван социалисăмлă государствăна кивçен паратăп. Манăн пуçарăва хамăрăн пур колхозниксем те пĕр çын пек хапăлласа ырлĕç, тесе шухăшлатăп. Епĕр лайăх пĕлетпĕр, епĕр государствăна кивçен паракан кашни тенкĕ вăл—социалисăм строителствине пысăк пулăшу пани пулать тата хамăр тăван çĕршывăн тăшманĕсене—фашисла ирсĕрсемпе вĕсен ирсĕр агентурине çĕнĕрен çапса хуçни пулать.

Çĕнĕ зайома пĕтĕм Сойуз тăрăх калама çук пысăк çĕкленÿпе çыранаççĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕн Геройĕсем—Громăв, Йумашĕв тата Данилин йулташсем Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене вĕçсе çитнĕренпе 1938 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче çулталăк тулать.

ÿКЕРЧĔК СИНЧЕ: „Вĕçев умĕн" (Совет Сойузĕн Геройĕн М. М. Громăв йулташăн портречĕ). О. Л. Дела—Вос—Кардовскайа художник картинĕ.

В. Иванов репродукцийĕ (Сойузфото) „Пресsклише".

Зайом анлăн саралать

СĔНТĔРВĂРРИ, ийулĕн 2-мĕшĕ (телефон тăрăх). Совет правителстви çĕнĕ зайом кăларни çинчен пĕлсен, Сĕнтĕрвăрри хулинчи предприйатисенче, учрежденисенче тата шкулсенче митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. Пухусенче рабочисем, служăшчисем тата ĕççыннисем пурте Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Зайомне кăларнине ырларĕç, çавăнтах зайом илме çыранма пуçларĕç.

Районти перекет касси пĕлтернĕ тăрăх, кăнтăрла тĕлне районĕпе 45.845 тенкĕлĕх зайом çыраннă. Сĕнтĕрвăрринчи „Портной" ертел членĕсем 8.540 тенкĕлĕх, районри сыхăну пайĕнче ĕçлекенсем 3.355 тенкĕлĕх, типографипе райхаçат редакцинче ĕçлекенсем 2.240 тенкĕлĕх çыраннă. Чылай рабочисем пĕр уйăх ĕçукçи чухлĕ тата ытларах та зайом çыранаççĕ. „Портной" ертелте ĕçлекенсем Кроболăвă тата Турăв йулташсем уйăхне 250 тенкĕшер ĕçлесе илеççĕ. Çĕнĕ зайома вĕсем 275 тенкĕшер çыранчĕç.

Ийулĕн 2-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри хулинче митинг пулса иртрĕ. Митинга 2.000 çын ытла тухнă. Митинга пынă çынсем çĕнĕ зайома йăнăçлăн сарма пулса, пурте пĕр çын пек пĕр кăмăллăн резољуци йышăнчĕç.

П. Сатур.

Правителствă решенине ырлаççĕ

ЕЛĔК (телефон тăрăх). Елĕк пуљницинче ĕçлекен врачсем, фељдшĕрсем, çестрасем тата ытти работниксем правителствă çĕнĕ зайом кăларма йышăннине ырлаççĕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче пуљницăра ĕçлекенсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура пурте пĕр шухăшлă пулса, зайома виçĕ ернери ĕçукçинчен кайа мар çыранма пулса резољуци йышăнчĕç.

Пуљницăра ĕçлекенсем çĕнĕ зайом пирки постановлени тухнă кунах зайом илме хавасланса çыранма тытăнчĕç. Йегорăв, Порфирйĕв, Гайкова, Илйина йулташсем хăйсен уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыранчĕç. Кунта малтанхи кунах 4.675 тенкĕлĕх çыраннă.

Йегорăв.

Колхозсенчи митингсем

КÿКЕÇ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи колхозсенче çĕнĕ зайом кăларнă йатпа митингсем пулса иртрĕç Ĕççыннисем пур çĕрте те çĕнĕ зайом кăларнине ырласа йышăнаççĕ.

Райĕçтăвкомра ĕçлекенсем, митинг хыççăн, 9.340 тенкĕлĕх, райçĕрпайĕнче ĕçлекенсем 4.570 тенкĕлĕх, Осоавиахимăн районри советĕнче ĕçлекенсем—650 тенкĕлĕх çыранчĕç.

Ийулĕн 2-мĕшĕнче Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомĕ (пĕрремĕш çулхи кăларăм) çинчен ăнлантарма ПСК(б)П Шупашкар райкомĕ йалсене 20 çын йачĕ.

Пурте пĕр кăмăлпа

Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан çĕвĕ ертелĕн коллективĕ ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Государствăн Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайомне кăларасси çинчен йышăннине пысăк кăмăлпа хапăл туса йышăнчĕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ митинга пухăннă рабочисем пурте пĕр сасăпа çĕнĕ зайома виç ернери ĕç укçихи епĕнчен кайа мар çыранса илме йышăнчĕç.

12 сехет тĕлне рабочисемпе служăшчисен нумай пайĕ 10 185 тенкĕлĕх зайом илме çыранчĕç Зайом илме çыранасси хаваслăн пырать.

Шупашкарта

●● Ийулĕн 2 мĕшĕнче Чăваш АССР-чи вăрман охранипе вăрмана лартса ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекенсен управленинчи рабочисемпе служăшчисем 19 çын çĕнĕ зайома 9 200 тенкĕлĕх çыранчĕç.

●● Шупашкарти сыхăну управленинче ĕçлекенсен килхуçи хĕрарăмĕсем кашнийех çĕнĕ зайом илме çыранаççĕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче килхуçи хĕрарăмсем 16 çын çĕнĕ зайома 425 тенкĕлĕх çыранчĕç.

●● Шупашкарти ремонт тăвакан механически савăтри рабочисемпе служăшчисем пурте зайом илме пысăк хаваслăхпа çыранаççĕ. Ийулĕн 2-мĕшĕнче 9 сехет тĕлнех савăтри пĕтĕм рабочисемпе служăшчисенчен 85 проценчĕ çĕнĕ зайома 19.850 тенкĕлĕх çыранчĕç. Уйăхри ĕç укçинчен шутласан ку вăл 100 процент ытла пулать.

Рабочисенчен чи малтан Горькăв, Сапожникăв, Добрынин, Йерошкин, Исмурин тата Петров йулташсем 500-шер тенкĕлĕх, çавăн пекех 7 çын 400 шер тенкĕлĕх зайом илме çыранчĕç.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели 1938 çулхи государствă планĕ çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти ийулĕн 1-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна палăртат: йулашки çулсенче колхозсенче выљăх-чĕрлĕх фермисем организацилесе вĕсене çирĕплетсе пынине тата колхозсемпе колхозниксене государствă йенчен анлăн пулăшса пынипе выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре чылай çитĕнӳсем тунă. 1934 çултан пуçласа 1938 çула çитиччен хушăра республикăра ĕне выљăхсен хисепĕ 23,5 процент, сурăхсемпе качакасем—23,3 процент, сыснасем—62,4 процент ӳснĕ.

1934 çултан 1938 çула çитиччен колхозсенчи таварлă выљăх-чĕрлĕх фермисен хисепĕ 1368 фермăран пуçласа 1687 фермăна çитнĕ. Çав çулсем хушшинче колхозсенче выљăхсен хисепĕ çапла ӳснĕ: ĕне выљăхĕ йенĕпе—254,7 процент, сурăхсемпе качакасем—20 хут ытларах, сыснасем—172,4 процент.

Çавăнпа пĕрлех выљăх кĕтӳне пахалăх йенчен лайăхлатас тĕлĕшпе те нумай ĕçсем тунă. 1937 çултах колхозсенчи ĕнесенчен 88,5 процент, сурăхсемпе качакасенчен 97 процент, сыснасене 94 процент ăратлă тата лайăхлатнă аçа выљăхсемпе чуптарса хăварнă.

Колхозсенчи таварлă выљăх-чĕрлĕх фермисем колхозниксене хăйсен хуçалăхĕнче усрама выљăх-чĕрлĕх туйантарас тĕлĕшпе пысăк пулăшу пана. 1934 çултан пуçласа 1938 çула çитиччен фермăсем колхозниксене 5632 пăру, 97231 сысна çури сутнă Унсăр пуçне тата, партипе правительствă государствă йенчен кивçенлĕх тата љготасем парса, пулăшнипе, ĕнесĕр колхозниксем контрактаци йĕркипе 25467 пăру туйаннă.

Анчах та, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, хăшпĕр выранĕсенчи совет тата çĕрĕç органĕсем, колхоз правленийĕсем йапăх ĕçленипе, ĕнесĕр колхозниксем хушшинче массăлă-политикăлă ĕçе çителĕксĕр туса пынипе, ĕнесĕр колхозниксене ĕне усракан туса çитермелле тесе партипе правительствă йышăннисене пирĕн республикăри условисенче çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пына, тесе шутлат. Колхозниксене ĕне туйантарас тĕлĕшне уйрăмăнах çак районсем йулса пыраççĕ: Куславкка, Вăрмар, Йелчĕк, Канаш тата Шанкăртам. Çав районсем колхозниксене ĕнелĕ тăвас тĕлĕшпе йалана ĕçлесе пыман, халь те ĕçлемеççĕ.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç республикăра çирĕппĕн ӳссе пынине палăртнипе пĕрлех, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çакна та палăртат: Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата выранĕсенчи чылай совет организацийĕсем çителĕксĕр ĕçлесе пынипе, çавăн пекех тата халăх тăшманĕсем сийен кӳрес тĕлĕшне ĕçлесе пына пирки, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç тĕлĕшĕпе парти тата правительствă пана чылай директивăсене пурнăçа кĕртейменнине палăртат. 42 колхозра халичченех выљăх-чĕрлĕх фермисем çук, выљăхсене ăратлатас ĕçе халь те йĕркелесе çитереймен, выљăх апачĕ никĕсне тăвас ĕç выљăх хисепĕ ӳсĕмĕнчех йулса пырат; лашасем ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пулса пырат; выљăхсене ветеринари тата зоотехникă йенчен пăхас ĕçе йапăх организациленĕ.

Чылай районсенче колхозсен выљăх-чĕрлĕх хисепĕ чакни çамрăк выљăхсенчен чылайĕшне пăхса ӳстерменни пулнă. 1937 çулта: Ишлей районĕнче лашасен хисепĕ 2,5 процент чакнă, Шупашкар районĕнче—0,4 процент, Улатăр районĕнче лашасен хисепĕ 0,1 процент чакнă тата тыхасенчен 7,2 процент, пăрусенчен 22 процент, сысна çурисенчен 15,1 процент пĕтнĕ; Йетĕрне районĕнче ĕне выљăхĕн хисепĕ 9,1 процент чакнă, тыхасенчен 7, 4 процент, пăрусенчен 13,3 процент, сысна çурисенчен 31,5 процент пĕтнĕ; Турхан районĕнче тыхасенчен 13,5 процент, пăрусенчен 30,2 процент, сысна çурисенчен 43,9 процент пĕтнĕ; Шанкăртам районĕнче пăрусем 31,8 процент, сысна çурисем 72 процент пĕтнĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, выљăхсен хисепне малашне ӳстерсе пынипе пĕрлех,—выљăхсен ăратлăхне лайăхлатса пынипе, выљăх апачĕн никĕсне çирĕплетнипе тата выљăхсене ветеринарипе зоотехникă йенчен пăхса тăрассине тĕрĕс организацилесе — выљăхсен продуктивлăхне ӳстерни халĕхи вăхăтра выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тĕп задачă пулса тăрат, тесе шутлат.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă 1938 çулта выљăх чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планĕпе килĕшсе, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Колхозсенче 1939 çулхи йанварĕн 1-мĕш тĕлне выљăхсен хисепне çакăн таран ӳстерме план çирĕплетес:

	Пиншер пуç шучĕпе	1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшне шутланинчен проц-па
Лашасем	110,0	105,5
Ĕне выљăхĕ	42,0	113,7
Вăл шутран ĕнесем	16,0	125,5
Сурăхсем	38,0	117
Сыснасем	60,0	105,7

Районсем тăрăх валеçсе пани хушса кĕртнин 1-мĕш номĕрĕнче.

2. Колхозсенче тата колхозниксен хуçалăхĕсенче 1938 çулта çамрăк выљăхсене пăхса ӳстермели плана çапла çирĕплетес (пиншер пуç):

	Колхозсенче	Колхозниксен хуçалăхĕсенче
Тыхасем	13,0	—
Пăрусем	11,0	45,0
Путексем	7,5	185,0
Качака путеккисем	—	12,0
Сысна çурисем	48,0	131,0

Районсем тăрăх валеçсе пани хушса кĕртнин 2-мĕш номĕрĕнче.

3. Чăваш йалхуçалăх сăнав станцийĕнче 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшне выљăхсен хисепне ӳстермели плана çапла çирĕплетес: лашасен хисепне 77 пуçа çитермеле, ĕне выљăхсене—140 пуçа, вăл шутран ĕнесене—60 пуçа; сыснасене—200 пуçа; 1938 çулта çамрăк выљăхсене ӳстермели план: тыхасем—3, пăрусем—42 тата сыснасем—152; Засурский лаша савăчĕ тăрăх—лашасене—127 пуçа, ĕне выљăхне—34 пуçа, вăл шутран ĕнесене 20 пуçа çитермеле; 1938 çулта пулнă çамрăк выљăхсене ӳстермели план: тыхасем—31, пăрусем—10 пуç.

4. 1938-39 çулсенче çамрăк выљăхсене пăхса ӳстерсе тата сутăн илсе, колхозсенчи пĕчĕк фермăсенче выљăхсен хисепне ӳстерме кирлĕ тесе шутлас. Колхозсенчи выљăх-чĕрлĕх ферминче выљăхсен хисепĕ çапла пулмала:

а) ĕне выљăхĕ ферминче—республикăн пур районĕсенче те 5 ĕнерен кайа мар;

б) сурăх фермисенче—республикăн пур районĕсенче те 20 сурăхран кайа мар;

в) сысна фермисенче—республикăн пур районĕсенче те 5 амаран кайа мар.

5. Колхозсенче çĕнĕрен выљăх-чĕрлĕх фермисем организацилеме тата пĕчĕк фермăсене пысăклатма пурĕ 2000 пăру сутăн илме тата контрактаци тума план çирĕплетес. Районсем тăрăх валеçсе пани хушса кĕртнин 3-мĕш номĕрĕнче.

6. Ĕнесĕр колхозниксене ĕнелĕ туса çитерме 1938 çулта колхозниксенчен 10000 пăру контрактацилеме тата колхозсенчи таварлă фермăсенчен 1938 çулта колхозниксене сутма 50000 сысна çури палăртса план çирĕплетес. Районсем тăрăх валеçни хушса кĕртнин 4-мĕш номĕрĕнче.

7. Колхозсенчи тата колхозниксен хуçалăхĕнчи выљăхсене ăратлă аçа выљăхсемпе 1938 çулта метизацилемели плана çапла çирĕплетес:

а) ĕнесем 144 пин пуç;

б) сурăхсем 292 пин пуç;

в) сыснасем 46,5 пин пуç.

Районсем тăрăх валеçни тата ăратăсене кăтартса пани хушса кĕртнин 5-мĕш номĕрĕнче.

Колхоз ама выљăхсене кăтартса пана ăратлă аçа выљăхсемпе чуптарса çитерме пултараймаст пулсан çеç урăх тĕрлĕ ăратăпа чуптарма пултарат.

8. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне колхозсенчи фермăсене ĕне выљăхсене чуптарма ăратлă аçа выљăхсене туйантарса çитерме хушас:

а) хĕрлĕ горбат ăратăри вăкăрсем—таса ăратлă тата çӳлĕ класлă çеç пулмала;

б) çимментал ăратăрисем—пур тĕрлĕ генерацилисем те йуракхлă.

9. Колхозсем валљи республикă тулашĕнчен çакăн чухлĕ ăратлă выљăхсене кӳрсе килме план çирĕплетес: вăкăрсене 700 пуç, сысна аçисене 500 пуç, ама сыснасем 200 пуç. Районсем тăрăх валеçсе пани хушса кĕртнин 6-мĕш номĕрĕнче.

10. Колхозсене государствă хакĕпе ăратлă выљăхсем сутмали плана çапла çирĕплетес: вăкăрсем 200 пуç, сысна аçисем 100 пуç, ама сыснасем 100 пуç. Весем Чăваш йалхуçалăх сăнав станцин тата колхозсенчи ăратлă фермăсенчен пулаççĕ. Районсем тăрăх валеçсе пани хушса кĕртнин 7-мĕш номĕрĕнче.

11 Ăратлă выљăхсене кӳрсе килес ĕçре çакăн пек йĕрке тăвас: районри çĕрĕç пайĕпе килĕшсе татăлса колхоз заказ пана хыççăн çеç колхоз валљи кӳрсе килмеле.

12. 1938 çулта колхозсенче выљăх апачĕ çакăн чухлĕ хатĕрлеме палăртас: çилос 120.000 тоннă, утă çулмали лаптăк 62.000 гектар; улăхсемпе кĕтӳ çӳретмели вырансене лайăхлатмали план: 500 гектар шурлăх типĕтмеле, 3.000 гектар тĕмсенчен тасатмала, 1.000 гектар вăрман кăкламала, улăхсене лайăхлатма 1000 гектар сухаламала тата 1000 гектар сухаласа курăксем акмала. Районсем тăрăх валеçсе пани хушса кĕртнин 8-мĕш номĕрĕнче.

13. Ветеринарипе зоотехникă йенчен ĕçлессине лайăхлатас тĕлĕшпе 1938 çулта зоотехникă участкисене 110 участка çитерес, ветеринари пунктисене 45 çитерес, ветфельдшĕр пунктисене 71 пункта çитерес, районсем хушшинчи (темиçе районпа пĕрле) ветеринарипе бактериологи лабораторийĕсене 4 çитерес. Районсем тăрăх валеçсе пани хушса кĕртнин 9-мĕш номĕрĕнче.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ районсенчи ĕç тăвакан комитетсене 1938 çулта выљăх ĕрчетмели план çинчи заданисене колхозсене тата çамрăк выљăхсене пăхса ӳстермели заданисене колхозсемпе колхозниксен хуçалăхĕсене вунă кун хушшинче çитерме хушат.

Плана колхозсене çитерне чух иртнĕ çулсенче пулнă йанаш практикă,—колхозра выљăхсем нумай пулсан та вăл колхоза выљăх сахал усракан колхоза пана задани чухлех выљăх хисепне ӳстерме задани пани,—пулмала мар. План пана чух пĕчĕк таварлă фермă тытакан колхозсенче выљăх хисепне ытларах ӳстерме кирлине асăрхамала.

Колхозсене выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе памали заданисене çирĕплетнĕ чух райĕçтăвком президиумĕн ларăвĕнче обйазательнăй майпа çав колхоз председателĕн тĕ пулмала.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне колхозсене çитернĕ чух вырансенчи совет организацийĕсен пурин те кашни колхозăн уйрăмлăхне тата колхозсем пана сĕнӳсене тĕплĕн шута илме кирли çинчен Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ уйрăмăнах асăрхаттарат.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ райĕçтăвкомсене, йалсоветсене тата колхоз правленийĕсене ĕнесĕр колхозниксене ĕнелĕ туса çитерессине çине хытă çавăрăнса пăхма тата çав политикăлă пысăк задачăна кăçал татса хума хушат.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ республикăри пур Совет организацийĕсене те выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татах малала йарас ĕçе большевикла тытăнма чĕнет, уйрăмнах выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пулнă сийенлĕ ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерме, колхозсенчи фермăсене çирĕплетме тата выљăх-чĕрлĕх продукцине ӳстерес тĕлĕшпĕ ĕçлеме чĕнет.

Массăлă-политикăла ĕçе сарса, государствă пана выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели 1938 çулхи плана ытлашшипех тултарса, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана политикăра тата хуçалăх ĕçĕнче пысăк выранта тăракан документ выранне хурса Ана орденлă Чăваш республикинче социалисăмлă выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре выљăхсен пахалăхĕшĕн тата хисепĕшĕн кĕрешмели хăватла хĕçпăшал тумала.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ— **Л. СПАСАВ.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ— **Н. ЖУКАВ.**

* *

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели 1938 çулхи государствă планĕ çинчен" йышăннă постановлени çумне хушса çырнисем

Хушса кĕртни 1-мĕш №

Колхозсенче 1939 çулхи йанварĕн 1 мĕшне ĕç выљăхĕ тата продуктивлă выљăхсем пулмали

ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Лашасем	Ĕне выљăхсем: Пурĕ	Ĕне выљăхсем: Вăл шутран ĕнесем	Сурăхсем	Сыснасем
Улатăр	2070	1680	610	850	820
Елĕк	5640	1600	564	2340	7970
Патăрйел	3810	1120	422	1140	2250
Вăрнар	7240	2900	1070	2790	3070
Йĕпреç	3780	1450	592	900	2130
Ишлей	4780	1650	662	2750	2650
Канаш	3705	1200	447	1000	1850
Куславкка	4360	2450	1050	1770	1750
Кувакино	2290	1300	510	1100	1300
Хĕрлĕ Чутай	4230	2450	1000	1440	1200
Сĕнтĕрвăрри	4320	1500	522	1300	1650
Пăрачкав	3600	1550	570	1200	1820
Турхан	2420	850	288	750	1050
Тутаркас	7170	4300	1565	2340	2900
Трак	6010	1350	530	2150	4120
Вăрмар	4920	1450	600	1440	3300
Çĕрпӳ	6480	1350	516	1700	5000
Шупашкар	4875	1870	722	1400	1150
Шăмăршă	2300	880	300	1250	1350
Шăнкăртам	2140	1150	455	2100	120
Çĕмĕрле	3220	1550	572	580	1150
Шăхасан	5420	1250	475	1500	3150
Йетĕрне	6330	2500	985	1500	2650
Йељчĕк	4560	1250	438	1360	3050
Тăвай	4330	1400	535	1850	2550
Пурĕ ЧАСС тăрăх	110000	42000	16000	38000	60000

Хушса кĕртни 2-мĕш №.

Колхозсенче тата колхозниксен хуçалăхĕнче 1938 çулта тыхасене, пăрусене, сурăхпа качака путеккисене тата сысна çурисене 1939 çулхи йанаварĕн 1-мĕшне ӳстермели

ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Колхозсенче: Тыхасем	Колхозсенче: Пăрусем	Колхозсенче: Путексем	Колхозсенче: Сыснасем	Колхозниксен хуçалăхĕсенче: Пăрусем	Колхозниксен хуçалăхĕсенче: Сурăх путеккисем	Колхозниксен хуçалăхĕсенче: Качака путеккисем	Колхозниксен хуçалăхĕсенче: Сыснасем
Улатăр	320	450	200	700	1500	3650	150	2350
Елĕк	630	400	440	6500	2400	10100	450	6170
Патăрйел	575	300	230	1800	1500	6100	600	5100
Вăрнар	750	750	620	2500	2400	11400	350	9340
Йĕпреç	475	400	200	1700	1500	6100	320	5000
Ишлей	395	400	400	2150	2250	9600	500	7450
Канаш	405	350	200	1450	1300	5700	500	5230
Куславкка	510	650	350	1400	1700	8300	850	4990
Кувакинă	360	350	270	1050	1350	4250	350	2300
Хĕрлĕ Чутай	380	650	300	900	2000	7700	200	4600
Сĕнтĕрвăрри	480	450	220	1350	2100	8450	700	7150
Пăрачкав	620	400	270	1450	1700	5150	400	3270
Турхан	310	200	210	800	1100	3700	380	4650
Тутаркас	675	1100	400	2300	3500	11350	300	9500
Трак	690	350	350	3300	1900	9500	550	5450
Вăрмар	540	400	260	2650	1900	9300	900	5600
Çĕрпӳ	760	400	320	4000	2100	11200	850	5530
Шупашкар	450	450	300	950	2000	9550	650	7620
Шăмăршă	360	250	360	1000	1100	3350	250	2330
Шăхасан	650	300	220	2600	1700	8700	450	6430
Шăнкăртам	330	300	450	100	900	2350	450	—
Çĕмĕрле	405	400	130	900	1250	4500	300	5050
Йетĕрне	650	600	230	2100	2850	11000	400	8380
Йелчĕк	670	350	300	2400	1700	7500	650	3620
Тăвай	600	350	270	1950	1300	6500	600	3890
Пурĕ ЧАССР тăрăх	13000	11000	7500	48000	45000	185000	12000	131000

Хушса кĕртни 3-мĕш №.

Колхозсенчи таварлă фермăсем валљи 1938 çулта колхозниксенчен сутăн илмели тата контрактаци тумали

ПЛАН

Районсем	пĕтĕмпе пăрусем
Улатăр	100
Елĕк	100
Патăрйел	50
Вăрнар	100
Йĕпреç	100
Ишлей	100
Канаш	100
Куславкка	100
Кувакинă	
Хĕрлĕ Чутай	50
Сĕнтĕрвăрри	150
Пăрачкав	100
Турхан	50
Тутаркас	100
Трак	100
Вăрмар	100
Çĕрпӳ	100
Шупашкар	100
Шăмăршă	50
Шăхасан	100
Шăнкăртам	—
Çĕмĕрле	50
Йетĕрне	100
Йелчĕк	50
Тăвай	50
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх	2000

Хушса кĕртни 4-мĕш №.

Колхозниксене харпăрхăй хуçалăхĕсенче усрама выљăхсем туйанма государствă йенчен 1938 çулта пулăшмали ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Колхозниксенчен пăрусем сутăн илмеле тата контрактаци тумала	Колхоз фермисенчен сысна çурисем сутмала
Улатăр	250	750
Елĕк	400	6900
Патăрйел	350	1200
Вăрнар	500	2450
Йĕпреç	300	1250
Ишлей	300	2360
Канаш	350	1750
Куславкка	750	460
Кувакинă	450	410
Хĕрлĕ Чутай	500	1030
Сĕнтĕрвăрри	500	720
Пăрачкав	400	1010
Турхан	250	670
Тутаркас	350	2050
Трак	850	3550
Вăрмар	900	3150
Çĕрпӳ	450	6480
Шупашкар	350	180
Шăмăршă	250	750
Шăхасан	450	3360
Шăнкăртам	275	100
Çĕмĕрле	275	720
Йетĕрне	300	3070
Йелчĕк	350	2800
Тăвай	400	2830
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх	10.000	50.000

Хушса кĕртни 5-мĕш №.

1938 çулта колхозсенче тата колхозниксен хуçалăхĕсенче таса ăратлă выљăхсем ĕрчетмели тата майракалă шултра выљăхсене сурăхсене, сыснасене метизаци тумали

ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Таса ăратлă тата метис вăкăрсемпе чуптармала: Симментал ăратăри: Пĕтĕмпе	Симментал ăратăри: Вăл шутран тата ăратлисем	Хĕрлĕ горбат: Пĕтĕмпе	Хĕрлĕ горбат: Вăл шутран таса ăратлисем	Пĕтĕмпе сурăхсене çинче çăмлă тата сурма шултра çăмлисемпе чуптармала	Ăратлă сысна аçисемпе чуптармала: Пĕтĕмпе	Ăратлă сысна аçисемпе чуптармала: Вăл шутран таса ăратлисемпе
Улатăр	3500			—	4400	620	620
Елĕк	—	—	7580	3000	18000	3550	2000
Патăрйел	2710	—	1890	—	8200	1500	1300
Вăрнар	—	—	9190	4530	18500	3300	2400
Йĕпреç	1570	—	3440	300	8700	1500	1210
Ишлей	—	—	7130	1650	16800	2730	700
Канаш	—	—	4300	750	7500	1750	800
Куславкка	—	—	6140	2300	13000	1300	800
Кувакинă	1900	—	2350	—	6500	760	760
Хĕрлĕ Чутай	—	—	6980	4200	10000	1500	1200
Сĕнтĕрвăрри	—	—	6590	2800	14200	2100	1700
Пăрачкав	1690	—	3420	—	7600	1100	1100
Турхан	1880	130	1520	710	5600	1180	960
Тутаркас	—	—	10500	1600	20500	6200	1800
Трак	—	—	5800	1650	17500	2600	1600
Вăрмар	—	—	5740	3500	15300	2000	1500
Çĕрпӳ	—	—	6850	6050	19500	3000	2700
Шупашкар	—	—	7600	6640	11900	1950	1750
Шăмăршă	2810	—	—	—	4900	660	560
Шăхасан	—	—	5560	1200	14000	2380	1400
Шăнкăртам	1070	70	1860	—	4500	40	40
Çĕмĕрле	—	—	4460	2800	6000	1650	1000
Йетĕрне	—	—	8620	3170	18000	3160	1700
Йелчĕк	2870	—	2160	—	10000	1450	900
Тăвай	—	—	4320	2150	10900	1520	1000
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх:	20000	200	124000	49000	292000	46500	31500

Хушса кĕртни 6-мĕш №.

Колхозсем валљи 1938 çулта республикă тулашĕнчен ăратлă выљăхсем кӳрсе килмели

ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Вăкăрсем: Симментал ăратăри	Вăкăрсем: Хĕрлĕ горбат ăратăри	Сыснасем: Сысна аçисем	Сыснасем: Ама сыснасем
Улатăр	40	—	10	—
Елĕк	—	35	20	20
Патăрйел	51	—	10	—
Вăрнар	—	—	—	—
Йĕпреç	60	—	20	—
Ишлей	—	25	25	10
Канаш	4	—	20	15
Куславкка	2	—	20	10
Кувакинă	55	—	30	15
Хĕрлĕ Чутай	—	20	20	20
Сĕнтĕрвăрри	—	30	25	—
Пăрачкав	54	—	40	—
Турхан	40	—	30	10
Тутаркас	—	30	30	—
Трак	—	28	15	—
Вăрмар	—	30	20	30
Çĕрпӳ	—	20	10	—
Шупашкар	6	—	20	—
Шăмăршă	30	—	10	10
Шăхасан	—	25	15	15
Шăнкăртам	20	—	2	—
Çĕмĕрле	4	2	20	10
Йетĕрне	—	40	35	10
Йелчĕк	30	—	35	15
Тăвай	—	17	15	—
Шупашкар хули	2	—	—	—
Чăваш й. х. сăнав станци	2	—	3	10
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх	400	300	500	200

Йулашки 3-мĕш страницăра

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Выԓăх-чĕрлĕх ĕрчетмели 1938 çулхи государство планĕ çинчен" йышăннă постановлени çумне хушса çырнисен йулашки

Хушса кĕртни 7-мĕш №.

Ăратлă выԓăх фермисенчен тата ытти хуçалăхсенчен 1938 çулта колхозсене ăратлă выԓăхсем сутмали ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Ăратлă фермăсенчен тата ытти хуçалăхсенчен сутмали: Вăкăрсем: Çимментал	Хĕрлĕ горбат	Сыснасем: Аçасене	Амасене	Колхозсем тăрăх валеçмеле: Вăкăрсем: Çимментал	Хĕрлĕ Горбат	Сыснасем: Аçасене	Амасене
Улатăр	60	—	—	—	—	—	5	—
Елĕк	—	—	—	—	—	15	—	20
Патăрьел	—	—	—	—	—	—	—	—
Вăрнар	—	—	—	—	—	—	15	—
Йĕпреç	—	5	—	—	—	—	—	—
Ишлей	—	—	—	—	—	8	5	10
Канаш	—	—	—	—	20	—	20	10
Куславкка	—	—	—	—	38	—	—	10
Хĕрлĕ Чутай	—	15	—	—	—	—	—	—
Кувакинă	40	—	—	—	—	—	—	15
Сĕнтĕрвăрри	—	—	—	—	—	20	10	—
Пăрачкав	—	—	—	—	—	—	—	—
Турхан	—	—	—	—	—	—	5	10
Тутаркас	—	—	—	5	—	20	—	—
Трак	—	—	—	—	—	—	10	—
Вăрмар	—	—	30	20	—	20	—	—
Çĕрпÿ	—	15	—	—	—	—	5	—
Шупашкар	—	—	—	—	26	—	10	—
Шăмăршă	—	—	—	—	—	5	5	—
Шăхасан	—	—	—	—	—	—	—	—
Шăнкăртам	—	—	—	—	—	—	—	—
Çĕмĕрле	—	15	—	—	16	—	—	10
Йетĕрне	—	20	—	—	—	—	—	15
Йĕлчĕк	—	—	—	—	—	—	10	—
Тăвай	—	—	20	25	—	5	—	—
Засурскăри Ленин ячĕпе тăракан колхоз	—	—	—	—	—	—	—	—
Чăв. ялхуç. опыт. станци	—	30	50	50	—	—	—	—
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх	100	100	100	100	100	100	100	100

Хушса кĕртни 8-мĕш №

1938 çулта, колхозсенче хăй тĕллĕн пулакан çарансене çулмали, çилос хывмали тата çарансене, выԓăхсем çÿретмели вырăнсене лайăхлатмали ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Утă çулса илмеле гектарпа	Çилос хывмала пин тоннăпа	Çарансене тата выԓăхсене çÿретмели вырăнсене тĕпренех лайăхлатмала: Шурлăх типĕтмеле	Çарансене тасатмала	Вăрман кăкламала	Çаран çĕнетме сухаламала	Сухалла курăк акмала
Улатăр	3290	4,0	40	150		108	57
Елĕк	4460	6,2	—	50	50	10	75
Патăрьел	1100	4,8	—	95	—	30	60
Вăрнар	4260	7,0	10	150	—	15	120
Йĕпреç	1060	4,7	—	50	300	20	9
Ишлей	2570	6,0	30	80	17	20	45
Канаш	740	4,3	10	30	3	60	33
Куславкка	4120	4,7	—	230	—	50	20
Кувакинă	1800	3,5	—	120	—	20	15
Хĕрлĕ Чутай	4180	5,6	40	250	—	120	30
Сĕнтĕрвăрри	3270	5,6	—	200	—	20	21
Пăрачкав	3640	4,4	60	200	—	70	57
Турхан	1780	3,5	20	70	200	15	40
Тутаркас	4250	7,7	100	300	200	150	40
Трак	2700	4,7	30	150	—	25	70
Вăрмар	660	4,7	—	—	—	20	21
Çĕрпÿ	3400	6,0	—	200	—	25	28
Шупашкар	4330	5,6	25	300	—	47	20
Шăмăршă	1260	2,3	15	40	65	10	15
Шăхасан	1550	4,3	10	85	—	55	15
Шăнкăртам	250	2,3	—	—	15	15	15
Çĕмĕрле	2370	4,3	100	150	50	50	34
Йетĕрне	4240	6,0	10	100		35	30
Йĕлчĕк	190	4,7	—	—	—	—	60
Тăвай	530	3,6	—	—	—	—	70
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх	52000	120	500	3000	1000	1000	1000

Хушса кĕртни 9-мĕш №.

1939 çулхи январĕн 1-мĕшне зоотехникă тата ветеринари участкисем, ветфельдшĕр пункчĕсем тата ветер. бактериологи лабораторийĕсем пулмали ПЛАН

РАЙОНСЕМ	Зоотехникă участкисем	Ветеринари участкисем	Ветфельдшĕр пункчĕсем	Ветбаклабораторисем
Улатăр	4	1	3	1
Елĕк	6	2	4	—
Патăрьел	4	2	2	1
Вăрнар	6	1	3	1
Йĕпреç	5	2	3	—
Ишлей	5	2	3	—
Канаш	4	2	3	—
Куславкка	5	2	3	—
Кувакинă	3	1	3	—
Хĕрлĕ Чутай	4	2	2	—
Сĕнтĕрвăрри	5	2	3	—
Пăрачкав	4	2	2	—
Турхан	3	1	3	—
Тутаркас	6	2	4	—
Трак	5	2	3	—
Вăрмар	4	2	3	—
Çĕрпÿ	6	2	3	—
Шупашкар	5	2	3	—
Шăмăршă	3	1	2	—
Шăхасан	4	2	3	—
Шăнкăртам	3	1	3	—
Çĕмĕрле	4	2	2	—
Йетĕрне	5	3	3	—
Тăвай	3	2	3	—
Йĕлчĕк	4	2	2	1
Шупашкар хули	—	—	—	—
Пĕтĕмпе ЧАССР тăрăх	110	45	71	4

Тырпулсене таса тытаççĕ

Пушнарти (Йетĕрне р.) Мичурин ячĕпе тăракан колхоз тырпулсене уйран пухса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе пыраҭ. Ку тĕлĕшпе колхоз „Смычка" колхозпа ăмăртаҭ. Социалисăмлă ăмăрту догăварне мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесех тăраççĕ. Йулашки хут тĕрĕсленĕ чухне, çÿм çумлас, тырпулсене пухса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе Мичурин ячĕпе тăракан колхоз малта пыни палăрчĕ.

Мичурин ячĕпе тăракан колхозри кашни бригадăра туна звеносем тырпулсене яланах таса тытса тăраççĕ. Çумкурăксене çитĕнме памаççĕ.

Бригадăсем ялхуçалăх машинисене, урапасене, витнĕ итемсене йусарĕç. Халĕ çĕнĕ тырпула хумали амбарсене тасатса дезинфекцилеççĕ.

Г. Короԓков.

Машинăсем хатĕр

Шетмĕпуç (Ишлей р.) ялсоветне кĕрекен „Çĕнĕ хунав" колхоз жнейкăсене, молотилкăсене тата ытти машинăсене йусаса пĕтерчĕ. Жнейкăсем çумне тыра пĕрчисене пухмалисем туса майлаштарса лартнă. Кашни бригадăра машинăсемпе ĕçлеме машин пайĕсене лайăх пĕлекен колхозниксене уйăрнă.

А. Çмирнов.

Парти пурнăçĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнче

Нумайах пулмаст, ПСК(б)П Обкомĕ Чăваш парторганизацинче партине илес, апелляцисене пăхса тухас, парти докумĕнчĕсене парас ĕçсем мĕнле пынине пăхса тухнă. Обком çакна палăртнă: чылай пуçламĕш парторганизацисенче, ПСК(б)П райкомĕсенче партине илес ĕççене пăхса тухмасăр выртараççĕ (ийунĕн 1-мĕшĕ тĕлне пăхса тухмасăр йулнă зайавленисем Чăваш парторганизацинче 375 пулнă), парти докумĕнчĕсене час памаççĕ (çĕнĕрен партине илнисене 217 çынна, партине кайала илмеле тунисенчен 40 çынна парти докумĕнчĕсем паман). Нумай пуçламĕш парторганизацисенче ку таранах çитсе те партине илме пуçламан.

ПСК(б)П Обкомĕ ПСК(б)П райкомĕсемпе Шупашкар хула комитетне çак ытусене хăйсен ларăвĕсенче пăхса тухма, çапла тунипе ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшакан практикăлла решенисем йышăнма хушнă.

Çавăн пекех Обком ПСК(б)П райкомĕсемпе Шупашкар хула комитетне партине илес ĕçре кайа йулса пыракан пуçламĕш парторганизацисен ĕççене тĕрĕслесе тухма, вĕсене ку ĕçре практикăлла пулăшу пама хушнă.

ПСК(б)П Обкомĕ парти докумĕнчĕсене вăхăтра памала тăвас йенĕпе кирлĕ решени йышăннă. ПСК(б)П Обкомĕн партин йертсе пыракан оргăнĕсен пайĕпе ПСК(б)П райком çекретарĕсене партине çĕнĕрен илнисене, çавăн пекех партине кайала илнисене те, пурне те ийулĕн 1-мĕшĕ тĕлне парти докумĕнчĕсем парса пĕтермеле тума хушнă. Малашне парти докумĕнчĕсене парас ĕçе тăсса пыни пулмала мар.

Коммуниссене ĕçре пулăшса пыратăп

Епĕ партин Трак райкомĕнче инструктăрта апрел уйăхĕнче ĕçлеме пуçларăм. Ĕçе пĕччен коммуниссене пулăшу парассинчен тытăнтăм. Манăн участкăра пуçламĕш парторганизаци пĕрре анчах, пĕччен коммуниссем 7 тата пуçламĕш комсомол организацисем 20 пур. Хăçан ялта пулмалине, кама мĕнле пулăшу памалине план çине кĕртнĕ, ĕçе планпа туса пыратăп. Пуçламĕш парторганизацинче хаԓ пухусене лайăх хатĕрленсе ирттереççĕ, коммуниссем мĕнле ыйтусене сÿтсе явассине пуху пуличчен 3 кун малтан пĕлеççĕ. Пĕччен коммуниссене пурне те парти вĕренĕвне явăçтарнă.

Куммуниссем пур ĕçре те малта пычăр тесе епĕ вĕсене пулăшатăп. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче партире тăман колхозниксем хушшинче епĕр агитаци ĕçне вăйлă сарса пытăмăр. Манăн участкăра суйлавçăсем хушшинче 55 кружок ĕçленĕ, вĕсенчен 2434 çын вĕренсе тухрĕç. Ĕçре Гаврилăв Михаил, Терентйĕв Иван, Уткинă Нинă, Йакăвлĕвă Йевдокийа агитатăрсем питĕ тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсене суйлав ирттсен те ĕçе явăçтарма шухăшлатăп.

Комсомол пуçламĕш организацисене пулăшас тĕлĕшпе епĕ Йаманакара комсомолĕцсен шкулĕнче пропагандис пулса ĕçлетĕп. Заԓатисене сиктерсе хăвармасăр, уйăхра 3 хут ирттеретĕп. Комсомолĕцсене парти ретне илессипе епĕ çителĕклĕх ĕçлеймен-ха, пĕтĕмпе те 2 комсомолĕца анчах парти ретне илнĕ. Манăн малала парти ретне ÿстерессипе ,нумайрах ĕçлеме тивет. Кандидатсенчен икĕ çынна парти членне куçарнă тата икĕ çынна парти кандидатне илнĕ. Манăн участкăри комсомол организацисенче комсомола малта пыракан çамрăксене çĕнĕрен 32 çынна илнĕ.

Райком çекретарĕ мана тăтăшах пулăшса пыраҭ. Обком инструктăрĕсен час-часах райком инструктăрĕсене ĕçре пулăшмала.

ПСК(б)П Трак райкомĕн инструктăрĕ Н. Катков.

Лекторий

Парти вĕренĕвĕн Тĕп çурчĕ лекторий кăçалхи май тата ийуԓ уйăхĕсенче Шупашкар хулинчи парти активĕ валԓи политикăпа ăслăлăх темисем тăрăх чылай лекцисем туса ирттерчĕ. Лекцисем вулана çĕре хулари пысăк квалификацилĕ лектăрсене явăçтарнă. Парти активĕ, студентсем, рабочисемпе служăшчисем вăл лекцисемпе питĕ интересленеççĕ, кашни лекцирех халăх нумай пулаҭ.

Çак ийуԓ уйăхĕнче лекторий тăвата темăпа лекцисем ирттерет: 1) Йевропăра мĕн пулса иртет (лектăр П. Григорйĕв), 2) В. И. Ленин йулашки хут пытанса пурăнни (лектăр Т. Гуçĕв), 3) Н. Г. Чернышевский çурални 110 çул тултарнă тĕле (лектăр Д. Данилăв), 4) Пĕчĕк ачана çемйере воспитани парасси (лектăр Н. Бокарĕв).

Лекцисем Динамо клубĕнче, ыран канмали кун тенĕ чух, каçхине 8 сехетре пуçланаççĕ.

1938 çулхи тырпула пухса кĕртесси çинчен ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решенине пурнăçа кĕртесси çинчен

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ йышăннă постановлени

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕçтăвкомсене, ПСК(б)П райкомĕсене, МТС, совхоз директăрĕсене тата колхоз председателĕсене ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăçалхи ийунĕн 17-мĕшĕнче „1938 çулхи тырпула пухса кĕртесси çинчен" йышăннă постановленине колхозниксен МТС-семпе совхозсенчи рабочисен, агрономсен тата служăшчисен йышлă пухăвĕсенче сÿтсе явма хушас.

2. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне ийулĕн 5-мĕшпе 10 мĕш хушшинче мĕн пур МТС-сенче—трактăриссене, комбайнерсене, машиноведсене, весовщиксене тата ялхуçалăхĕнчи мĕн пур специалиссене хутшăнтарса производствăлă кăнашлусем туса ирттерме хушас, вăл канашлуçенче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине сÿтсе явмала, тырпула комбайнпа пухса кĕртмели плансемпе графиксене, МТС комбайнисемпе молотилкисен маршручĕсене пăхса тухмала.

3. Çавăн пек вăхăтрах мĕн пур колхозсенче бригадăсен производствăлă канашлăвĕсене туса ирттермеле, вăл канашлусенче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен, тырпулсене пухса кĕртмели плансем çинчен, тырпулсене пухса кĕртнĕ чухне ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тăратса тухасси çинчен, тыра вырмали машинăсен ĕç графикĕсем çинчен, тырпулсене пухса кĕртес ĕçри ĕç нормисемпе расценкисем çинчен сÿтсе явмала.

4. Ăмăртакан колхозсен тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитнине ийулĕн 10-мĕшпе 15-мĕш хушшинче пĕр пĕрне тĕрĕслесе тухмала. Çав тĕрĕслеве колхозниксен йышлă массисене явăçтармала тата тĕрĕслÿ итогĕсене колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче сÿтсе явмала.

5. Ăмăртакан районсен тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитнине ийулĕн 17-мĕшчен пĕр-пĕрне тĕрĕслесе тухмала, ийулĕн 17-мĕш 20-мĕш хушшинче ăмăртакан районсенчи колхозсемпе ялсовет председателĕсен тата ялхуçалăх специалисĕсен канашлăвĕсене туса ирттермеле, вăл канашлусенче тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленсе çитнине тĕрĕсленин итогĕсем çинчен тата социалисăмлă ăмăрту догăварĕсене пурнăçа кĕртнин итогĕсем çинчен сÿтсе явмала.

6. ПСК(б)П райком çекретарĕсене тата райĕçтăвком председателĕсене—ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи ийунĕн 17-мĕшĕнче йышăннă решени мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен ийулĕн 10-мĕш тĕлне ПСК(б)Парти Обкомне докладсем тăратмала тума хушас.

ПСК(б)П Обком çекретарĕ Г. ИВАНОВ.

Бригадăсем ăмăртаççĕ

Паваркассинчи (Çĕрпÿ р.) „Красная Павария" колхозра хирти тырпулсене пухса кĕме хатĕрленеççĕ. Колхозăн 4 бригадă. Кашни бригадă валԓи ĕç планĕсем тунă, кашни колхозник тыра вырнă вăхăтра ăçта, хăш участкăра ĕçлессине тĕплĕн пĕлет. Бригадăсенче жнейкăпа тыра вырма ултшар лаша уйăрнă. Вăл лашасене хаԓ уйрăмăн пăхаççĕ.

Çĕнĕ тырра хума колхозăн 15 склад пур, вăл складсене çуса дезинфекцилеççĕ. Халĕ 3 складне тасатса хатĕрленĕ. Тырпула вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕрес тĕлĕшпе бригадăсем пурте пĕр-пĕринпе социалисăмлă ăмăртăва тухнă.

В. Васильĕв.

Пулас артиллериссем

Çÿтĕç Халăх Комиссариачĕ Мускавра йатарласа уçнă шкулсенче вĕренекенсем. Вăл шкулсенчен вĕренсе тухсан Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн артиллери училищисене вĕренме кĕреççĕ.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Йатарласа уçнă 5-мĕш шкулта вĕренекенсем—Николай Репин тата Владимир Кудавкин шкул библиотекинче.
Е. Евзарихин фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото—„Пресклише").

Çевастопăԓ—Архангĕлск

Çар лԓотчицисем Оçипенко, Ломако тата Раскова ниçта анса лармасăр вĕçни

1938 çулхи ийулĕн 2-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 4 сехет те 36 минутра çар лԓотчицисем—аслă лейтенант Полина Денисăвна Оçипенко, аслă лейтенант Верă Федăрăвна Ломако тата штурмăн лейтенант Марина Михайлăвна Раскова пĕр моторлă „МП-1" йышши гидросамоԓотпа Çевастопăԓ—Кийĕв—Новгород—Архангĕлск маршрутпа ниçта анса лармасăр вĕçнĕ.

15 сехет те 09 минутра Оçипенко йулташ Холмовки текен кÿлĕ çине (Архангĕлскран кăнтăр йенне 15 километр) лайăхах анса ларнă.

2416 километр тăршшĕ пĕтĕм çула „МП-1" самоԓот сехетре вăтам хăвăртлăхпа 228 километр кайса 10 сехет те 33 минут хушшинче вĕçсе тухнă.

Гомел—Витебск—Великийе Луки—Новгород тĕлĕнчи участкăра пĕлĕтсем хушшипе вĕçнĕ. Водлозертан пуçласа Архангĕлска çитиччен самоԓот пĕлĕтсен айĕпе, пĕлĕтсен хушшипе пынă.

Совет лԓотчицисем Оçипенко, Ломако тата Раскова хăйсем умне лартнă задачăна чаплăн пурнăçа кĕртнĕ.

(ТАСС).

Архангĕлскран, 38 ç. ийулĕн 2-мĕш

МУСКАВ, КРЕМԒ

Иосиф Виссарионăвич Сталина

Çевастопăԓ—Архангĕлск маршрутпа ниçта анса лармасăр вĕçсе тухассине пурнăçа кĕртнĕ. Сирĕн кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр тăратпăр.

ОÇИПЕНКО, ЛОМАКО, РАСКОВА.

Архангĕлскран, ийулĕн 2-мĕш—38 çул

МУСКАВ, КРЕМԒ

Сталин, Молăтăв, Калинин, Каганович, Йежов йулташсене

Сирĕн заданине—Çевастопăԓ—Архангĕлск маршрутпа ниçта анса лармасăр вĕçсе тухассине пурнăçа кĕртни çинчен хавасланса пĕлтеретпĕр. Партипе правителствăн кирек мĕнле заданине те пурнăçа кĕртме хатĕр.

ОÇИПЕНКО, ЛОМАКО, РАСКОВА.

Архангĕлск

Аслă лейтенантсене—ОÇИПЕНКО, ЛОМАКО йулташсене тата лейтенант РАСКОВА йулташа

Гидросамоԓотпа Çевастопăԓ—Архангĕлск маршрутпа ниçта анса лармасăр вĕçсе тухассине ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ йатпа мухтавлă лԓотчицăсене—Полинă Оçипенко, Верă Ломако тата Маринă Раскова йулташсене хĕрÿллĕн сывлăх сунса саламлатпăр.

Хăйсен чаплă вĕçевĕпе совет авиацийĕн историне каллех тепĕр рекорд çырса хунă совет хĕрарăм-лԓотчицисен хайулăхĕпе, паттăрлăхĕпе тата пысăк маçтăрлăхĕпе мухтанатпăр.

Сирĕн аллăрсене хыттăн чăмăртатпăр.

И. СТАЛИН
В. МОЛĂТĂВ
К. ВОРОШИЛĂВ
М. КАЛИНИН
Л. КАГАНОВИЧ
Н. ЙЕЖОВ.

10 пин çынлă митинг

УЛАТĂР (телефонпа). Районри тата хулари ĕççыннисем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене суйлани çинчен пĕлтернине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Ийунĕн 28-мĕшĕнче Улатăр хулинчи ĕççыннисен 10 пин çынлă митингĕ пулчĕ. Митинга ПСК(б)П Улатăр райком çекретарĕ Потапăв йулташ уçрĕ. Вăл суйлавçăсене Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата халăхсен çулпуçне Аслă Сталина, унăн çывăх соратникĕсене суйлани çинчен пĕлтерсен, митинга пухăннисем тăвăллăн алă çупса Сталин йулташа саламларĕç.

Унтан Улатăр райĕçтăвком председателĕ Çеменăв, ПСÇЛКС Улатăр райкомĕнчен Йемелйанăв, паравуссем йусакан саватран Макарăв йулташсем тухса хĕрÿлĕ сăмахсем каларĕç. Макарăв йулташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ.

— Ийунĕн 26-мĕшĕ коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çирĕппине тепĕр хут пĕтĕм тĕнчене кăтартрĕ. Вăл кун епĕр Сталин йулташ тавра татах та çирĕпрех пĕтĕçрĕмĕр. Епĕр, Улатăрти чукунçул суйлав округĕнчи суйлавçăсем, çак кун Сталин йулташăн паттăр соратникĕшĕн Лазарь Моисейĕвич Каганович йулташшăн сасăларăмăр. Епĕ Каганович йулташшăн сасăласан чĕререн савăнтăм. Ман пекех пĕтĕм суйлавçăсем савăнчĕç. Ийунĕн 26-мĕшĕнче пирĕн халăх Сталин йулташа вĕçĕ-хĕррисĕр йуратни курăнчĕ. Епĕр Октйабĕрте çĕнсе илнисене сыхлама кашни минутрах хатĕр.

Сывă пултăр аслă совет халăхĕ!

Сывă пултăр пирĕн депутат Каганович йулташ!

Тата лайăхрах ĕçлеме пулатпăр

ШĂХАСАН (телефонпа). Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ чаплă çĕнтерÿ тунă йатпа районра кашни суйлав округĕнчех хаваслă митингсем пулса ирттеççĕ.

Ийунĕн 29-мĕшĕнче Шăхасанта 8 пин çынлă митинг пулчĕ.

✳ Ачасен техникăла станцинче çĕнĕрен фотолаборатори, авиомоделисăм тата радио пÿлĕмĕсем тунă. Нурăсри ачасен техникăлă станцийĕ Елĕкри ачасен техникăлă станципе ăмăртса ĕçлет. Станци валԓи çулталăкра тĕрлĕ япаласем илме 11.500 тенкĕ укçа уйăрса панă, анчах станцă çав укçапа çителĕксĕр усă кураҭ-ха. Станцинче конструктăр пур, анчах чертежсем çук пирки пĕтĕм ĕç чарăнса тăраҭ. Инструктăрсем валԓи кирлĕ кĕнекесемпе хаçат-журналсем çук. Республикăри ачасен техникăлă Тĕп станцин Нурăсри станцине пулăшу памала.

К. Нарышкин.

Марти йачĕпе тăракан савăтра (Николаевск хули) „Лазарь Каганович" ĭарçĕмĕрене туса пĕтерессĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Лазарь Каганович" пăрçĕмĕрен савăт верфийĕнче.
Д. Великжанин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото) „Прессклише".

Лăпкă океан çинчи флот карапĕсемпе батарейĕсенче—хăватлă техникă, ытарайми паха çынсем

Лăпкă океан çинчи командăвани чĕннипе, епĕр пайăн хĕшпĕр карапĕсемпе çыранти оборонăн огневой точкисене пултăмăр. Кунта епĕр мĕн курни епĕр курма шутланнинчен нумай ытлах иртсе кайрĕ. Уйрăмах шыв айĕпе çӳрекен карапсем хыттăн тĕлĕнтерчĕç, вĕсем калама çук чаплă та вăйлă техникăпа авăрланнă. Морйак-подводниксем, çав техникăна чаплăн тыткалама пĕлекенскерсем, пире пит ăшшăн кĕтсе илчĕç. Вĕсем пирĕнтен çак вĕçеве пуçарса йаракане çинчен—Сталин йулташ çинчен, епĕр вĕçнĕ çулăн деталĕсем çинчен тимлĕн ыйтса пĕлчĕç. „Мускав" йышши самолетсем Лăпкă океан çыранĕсенчи условисенче те усă курма май пуррипе интересленчĕç.

Кунсăр пуçне пире çиçĕм пек хăвăрт çӳрекен торпедăлă катĕрсемпе вĕсем çинчи мухтавлă çынсем те сахал мар тĕлĕнтерчĕç.

Хăшпĕр объектсене пире краснофлотецсемпе командирсем хăйсене шанса панă механизмсене лайăх вĕренсе çитнине тата вĕсемпе ĕçлеме лайăх чĕлнипе те кăтартрĕç. Батарейĕсенче артиллеристсем хăйсен ĕçне тĕплĕн пĕлсе ĕçлерĕç. Епĕр курнă машинисем—вĕсен техникине лайăх вĕренсе çитнĕ боецсемпе командирсен аллинче. Вĕсене совет патриотисăмĕн асла туйăмĕ, тăван çĕршыва тата халăхсен çулпуçне Сталин йулташа чĕререн йуратни çĕклентерсе хавхалантарать, кирлĕ самантра вĕсем тĕлĕнмеле ĕçсем туса кăтартĕç.

Совет çĕршывĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чиккисем нĕкам пырса тĕкĕнейми çирĕппине епĕр татах тепĕр хут курса ĕнентĕмĕр.

Лётчик В. КОККИНАКИ.
Штурман А. БРЙАНДИНСКИЙ.
Владивосток, ийулĕн 1-мĕш.

Пограничниксем партине кĕреççĕ

ХĔВЕЛАНĂÇ ЧИККИ, ийулĕн 2-мĕш. Çĕршер пограничник-комсомолĕцсем БССР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленес ĕçе, ăна иртерес ĕçе активлăн хутшăнса ĕçленĕ, вĕсем агитатăрсем пулса, участкăри суйлав комиççисен членĕсем пулса ĕçленĕ. Халь вĕсенчен нумайĕшĕсем партине кĕресси çинчен зайавленисем панă.

Партбӳрон ответлă çекретарĕ пулса Байрачный йулташ ĕçлекен чаçри парторганизаци ийунь уйăхĕнче суйлав кампанин активисĕсене 23 çынна ПСК(б)П кандидатне илнĕ.

Слесăр пулнă комсомолĕц Гурăв йулташа парти кандидатне илнĕ. Чаçре пулнă вăхăтра Гурăв йулташ политикă тĕлĕшĕнчен ӳснĕ, калама çук лайăх агитатăр пулса тăнă. Вăл чикĕне сыхлас ĕç службине кăтартулă лайăх туса пырать. Ăна пĕр хут çеç мар премисем панă. Парти кандидачĕсен ретне кĕнисен шутĕнче—комсомолĕц Остин йулташ, унăн служба спискинче чикĕ урлă хĕçпăшалпах каçна тăшмансене тытса чарни çинчен çырса хунă вырăнсем сахал мар.

(ТАСС).

Совет Сойузĕн Геройĕсем Спирин, Громăв, Йумашĕв тата Данилин йулташсем Мускава таврăннă

Ийулĕн 2-мĕшĕнче Совет Сойузĕн Геройĕсем—комбриг Спирин, комбриг Громов, комбриг Данилин тата полковник Йумашĕв Мускава таврăннă, вĕсем совет делегацин составĕнче Берлина, Пĕтĕм тĕнчери Авиаци Федерацин 33-мĕш конференцине кайнă пулнă.

Конференцире тĕрлĕрен çĕршывсенчи лётчиксене 1937 çулта авиаци ĕçĕнче уйрăмах паллă çитĕнӳсем тунăшăн медальсем панă. Виçĕн пĕрле Мускавран тухса Çурçĕр полюсĕ урлă Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене çитиччен вĕçнĕ вăхăтра тӳрĕ тата кукăр-макăр линисемпе инçене вĕçсе тунă рекордсемшĕн совет лётчикĕсене Громăва, Йумашĕва тата Данилина ылтăн медальсем панă.

Пĕтĕм тĕнчери Авиаци Федерацин конференцинче Германин вуншар журналисĕсемпе фотографĕсем пулнă пулсан та, совет лётчикĕсене медальсем пани çинчен фашиссен хаçачĕсем пĕр сăмах та çырман.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Ийулĕн 2-мĕшĕнче Мускаврă йывăçран тунă çичĕ çурта 250—300 метр таран айаккала куçарса пĕтернĕ. Йывăç çуртсене пăсмасăрах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарасси столицăра халиччен пулманскер. Çуртсене куçарма хатĕрленес ĕç пĕтĕмпе 5—6 кун хушши йышăнать, куçарасси—2 сехете йахăн кăна пырать.

●● Ийулĕн 2-мĕшĕнче Мускавра йалсоветсем çинчен Положени туса хатĕрлес ыйтупа канашлу уçалнă, ăна Пĕтĕм Российа Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ пухнă. Канашлăва РСФСР-ти облăçсемпе автономлă республикăсенчен чылайĕшĕсенчен йалсоветсемпе райĕçтăвкомсен представителĕсем пынă.

●● Совет Сойузĕнчи чей плантацисем çак çулăн пуçламĕшĕнче 45.300 гектар йышăннă. Кăçалхи çул чей плантацисен çĕр лаптăкĕ 6 пин гектар ытла ӳсмеле. Иртнĕ çулта пĕтĕм Сойуз тăрăх 27.212 тоннă чей çулçи пухнă. 1938 çулхи план тăрăх кăçал 35.065 тонна хатĕрлемеле. Хальхи вăхăтра 10.420 тоннă хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

●● Герой-папанинĕцсене хисеплесе кăларнă çĕнĕ йышши почта маркисем çӳреме пуçлаççĕ. 10 пуслăх, 20 пуслăх, 30 тата 50 пуслăх çĕнĕ маркăсем çине папанинĕцсене пăр çинчен илсе тухнине тата тăватă герой пăрçĕмрен çинче килнине ӳкернĕ.

●● Полтавă облăçĕнчи Большие Сорочинцы йалĕнче Украинфильм тĕслĕ (цветной) фильм—„Сорочинская ярмарка" йатлă комеди ӳкерме тытăннă. Фильм Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци XXI çул тултарнă тĕле кăтартмала пулать.

●● Колхозниксемпе колхозницăсемшĕн лайăх пултăр тесе, Винницă облăçĕнче пурĕ 159 йалта загссем уçнă. Загссенче лайăх сĕтел-пукансем лартнă, чечексемпе илемлетнĕ.

●● Ворошиловградри Октăбĕр революцийĕ йачĕпе тăракан савăт çурçулăх заданине пĕтĕмпех тултарнă. Ултă уйăх хушшинче 345 вăйлă пăравус туса кăларнă—плана 100 процент тултарнă.

●● Бакури мухтавлă нефтаниксем çĕнĕ çĕнтерӳ тунă, ийунь уйăхĕнче нефть кăларас плана 102,7 процент тултарнă. Бакури нефть промышлĕннăçĕ плана çакăн пек рекордлăн тултарни халиччен те пулман.

(ТАСС).

Хроника

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ К. П. Касаткин йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççин председателĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Йывăр промышлĕннăç халăх комиссарĕн заместителне М. Г. Первухин йулташа Йывăр промышлĕннăç Халăх Комиссарĕн пĕррремĕш заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Йут çĕршывсенче

Фашиссем мирлĕ йалсем çине бомбăсем пăрахаççĕ

Италипе Германи авиацийĕ, Испанири пăлхавçăсен службинче тăраканскер, çынсем пурăнакан вырăнсем çине, мирлĕ халăх çине бомбăсем пăрахма чарăнмасть. Республикан истребителĕсемпе çулелле перекен тупăсем пăлхавçăсен самолечĕсене пысăк хуласем патĕнчен хăвăла-хăвăла йăраççĕ, вара вĕсем пĕчĕк пунктсемпе йалсем çине бомбăсем пăрахса çӳреççĕ, мĕншĕн тесен унта вĕсемшĕн хăрушлăх çук. Валенçи сывăхĕнчи çыransem чылай йалсем çине фашиссен самолечĕсем çĕнĕрен пырса бомбăсем пăрахнă. Фашиссен виçĕ моторлă самолечĕсен икĕ ескадрилйи çавăн пекех Лирийа çине (Валенçирен çурçĕр-хĕвеланăç йенеле) бомбăсем пăрахнă. Фашиссем бомбăсем пăрахнă пур пунктсенче те вилнисемпе аманнисем пур.

Ийулĕн 1-мĕшĕнче çĕрле фашиссен икĕ пысăк бомбардировщикĕ Дениа хулипе порчĕ çине бомбăсем пăрахнă. Вунпĕр çурт тата пулă тытмалли 8 кимĕ çĕмĕрелнĕ. Йывăр аманнисем пур.

Англин Валенçири консулĕн Валенçи сывăхĕнчи çулпа пыракан автомобилне пăлхавçăсен самолечĕсем пулеметран пенĕ.

Ийулĕн 30-мĕшĕнче пăлхавçăсен артиллерийĕ Мадридăн халăх пурăнакан кварталĕсем çине пенĕ. Республика артиллерийĕ хирĕç пеме тытăнсан, пăлхавçăсем часах пеме чарăннă.

(ТАСС).

Китай халăхĕ троцкисла предателсене хирĕç кĕрешет

ШАНХАЙ, ийулĕн 1-мĕш. Китай хаçачĕсем Китайри троцкиссен Цзйанси провинцин кăнтăрти пайĕнче сутăнчăкла ĕçсем туни çинчен çырса кăтартаççĕ. Цзйанси провинцин кăнтăрти пайĕнчи хăшпĕр районсенче троцкисле суйа-партизан отрйачĕсем сиксе тухнă, вĕсем тыла çĕмĕрес шутпа провокацилĕ ĕçсем тума пуçланă. Çакна кура Китайри коммунисла партин вырăнти комитечĕ халăха йатарласах чĕнсе каласа, троцкиссен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă.

Анчах троцкиссем хăйсен ирсĕр ĕçне тума чарăнман. Вĕсем тыла вăйсăрлатса тăшмана пулăшас тесе, мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тăваççĕ. Шултăра çĕрхуçисем пулăшнипе, халăха суйа сăмахсемпе улталама хăтланса, троцкиссем коммуниссемпе Китай правителстви партийĕпе—Гоминданпа килĕштерсе, пĕрле ĕçленине çĕмĕресшĕн темĕн те пĕр хăтланаççĕ.

Китай Йапони захватчикĕсене хирĕç тăнине вăйсăрлатас шутпа çине тăрсах предателле ĕçсем туса пырса, троцкиссем халăха мобилизацилес ĕçе, тупăшсем пухас ĕçе çĕмĕрме, çавăн пекех правителстvă Китай хăватне тĕреклетес шутпа тăвакан ытти ĕçсене те çĕмĕрме тăрăшаççĕ.

Китай влаçĕсем троцкиссене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе тумали ĕççене палăртса хунă тата пĕтĕм халăха троцкисла предателсене хирĕç пыракан кĕрешӳве хутшăнма чĕнеççĕ.

(ТАСС).

Германи Чехословакипе йунашар чикĕсене халь те çарсем илсе пырать

ПРАГА, ийулĕн 2-мĕш. (ТАСС). Фашисăма хирĕçле пичет пĕлтернĕ тăрăх, Германин тĕрлĕ районĕсене, пуринчен ытла Чехословакипе йунашар чикĕсем патне пĕрмайах çарсем илсе пыраççĕ, тактикăлла вĕренӳпе маневăрсем те пĕрмайах туса ирттереççĕ. Саксонин хĕвелтухăç йенчи районне йулашки икĕ ерне хушшинче йывăр йышши 25 танкпа броньăлă чаççем, виçĕ полк йывăр артиллери батарейĕсем (пурĕ 5.000 çын), икĕ полк йывăр артиллери, бомбометчиксем (1.000 çын) тата çыхăну чаçĕсем (2.000 çын) çитнĕ.

Чикĕ хĕрринчи ытти районсенче те фашиссен çар йышши организацисен чаçĕсене, çар чаçĕсене тата авиацин пысăк сойединенийĕсене пухнă. Салтаксене çине тăрсах çар ĕçне вĕрентеççĕ. Кунсăр пуçне, Германи салтакĕсене пурне те чех чĕлхине вĕрентеççĕ, вĕсем Чехословаки географийĕ тата унăн стратегилĕ лару-тăрăвĕ çинчен лекцисем итлеççĕ.

(ТАСС).

Чехословаки çарĕсен маневăрĕсем

ӲКЕР ЁК ÇИНЧЕ: Пулеметчиксем маневăрсенче. (Сойузфото) „Прессклише".

Çĕнĕ шкулсем

★ ЙĔПРЕÇ. Вăтайалĕнче кутаранччен йатарласа тунă шкул çурчĕ пулман. Ачасем уйрăм çынсен хваттерĕсенче, тĕттĕм çуртсенче вĕренсе пурăннă. Кăçал кунта пуçламĕш шкул валли 17 пин тенкĕ тăракан çĕнĕ çурт лартаççĕ.

Çавăн пекех Вăтайалĕнчи колхоз та хăйне валли çĕнĕ клуб тăвать. Халь грузовик туйанчĕ.

С. Малиновский.

★ ВАРНАР. Шкул ачисем халиччен вак-тĕвек, çутă çителĕксĕр тĕттĕм пӳртсенче вĕревсе пурăннă пулсан, кăçал Уйкас йалсоветĕнче 100 ача шăнăçмалăх çĕнĕ шкул туса пĕтереççĕ. Шкул çутă та таса, культурăлă пулать.

Йалсовет председателĕ Зайцĕв йулташ тăрăшнипе халь йалсовет валли лайăх канцельари туса лартрĕç. Канцельаринче радио пур. Çак кунсенчех телефон кĕртеççĕ.

П. Арсентйĕв.

Çулахи каç

Каç тӳлек, тӳпе кӳлĕ пек тăрă,
Ишет уйăх хуллен чĕтренсе,
Кăнтăр çилĕ чупать хир-вар тăрăх
Ир çинчен ăш хыпар пĕлтерсе.

Шыв йуххи кĕмĕл йевĕр çуталчĕ,
Уйăх чăмрĕ хăй пĕлнĕ йĕрпе.
Кĕтра хурăн кĕтет пĕр-пĕр каччă
Килессе хăй йуратнă хĕрпе.

Вăйăра купăс сас пачĕ уççăн,
Калаçаççĕ хĕрсем хуллен çеç:
— Çĕршыва хураллать манăн тусăм!..
— А ман тус пĕлĕт тăрăх вĕçет!..

Çиле май илтĕнет мотор шавĕ,
Ĕçлет трактăр колхоз хирĕнче.
Ав, йурлать трактăрис çĕнĕ йурă
Çак телейлĕ, ыр пурнăç çинчен.

Çуталать. Сăрланать шурăмпуçĕ,
Йывăççем саламлаççĕ ире.
Кремĕлре—халăхсенĕн çулпуçĕ.
Ырлăх, сывлăх сунать вăл пире.

Кремĕлрен вăл сăнать çĕршыва та,
Сăнать çутă ире, тухăçа...
Салам, Сталин, сана! Ĕсĕ патăн
Çуркунне пек хитре пурнăçа.

Ваç. Ваçкин.

Партком çекретарĕсемпе парторгсене

Ийулĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцинче парти пурнăçĕн ыйтăвĕсем тăрăх Шупашкарти пуçламĕш парторганизацисен партком çекретарĕсемпе парторгĕсен канашлăвĕ пухăнать. Канашлăва çак парторганизацисенчен партком çекретарĕсемпе парторгсем килмеле: Спирт савăчĕ, Тир-сăран савăчĕ, Пожарнăй командă, КПК, Осоавиахим, Чебторг, Профсойузсен çурчĕ, Хула совечĕ, Типографи, Хатĕрлев халăх комиссариачĕ, Сутă халăх комиссариачĕ, Чăвашторг, Макарон хапрăкĕ, „Кооператăр" ертел, Вăрман промысла ертелĕ, Вырăнти промышлĕннăç халăх комиссариачĕ, Вăрманпромсойуз, Автогужтрест, „Водосвет", Кирпĕч савăчĕ.

„Чăваш Коммунĕ" редакци.
ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

ВĂРНАРТИ ЗООВЕТТЕХНИКУМ
1938—1939 ÇУЛСЕНЧЕ
вĕренекенсене илесси çинчен пĕлтерет

ТЕХНИКУМĂН ИКĔ УЙРĂМ

Зоотехникă уйрăмĕ — майракалă шултра выльăхсем тăрăх ĕçлекен специальнăçпе кĕçĕн зоотехниксем вĕрентсе хатĕрлет. Вĕренмели срук 4 çул. 30 çын йышăнаççĕ.

Ветеринари уйрăмĕ — ветеринари врачсен помощникĕсене вĕрентсе хатĕрлет. Вĕренмели срук 4 çул. 60 çын йышăнаççĕ.

Пĕррремĕш курса 15 çулхисенчен 30 çулхисем таран çичĕ çуллă шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Зайавленисене 1938 çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 18-мĕшчен йышăнаççĕ.

Зайавленисемпе пĕрле çак документсем кирлĕ: 1) Тулли мар вăтам шкул пĕтерни çинчен свидетĕлствă (подлинник), 2) Государствăн емеллекен учрежденисенчен илнĕ справкă, ун çинче вĕренме кĕрекенĕн сывлăхĕ ку техникума вĕренме кĕме йурăхлине кăтартни пулма кирлĕ, 3) Хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă, 4) Икĕ фото-картăчкă (зайавлени параканĕн хăйĕн алпусса пĕр-пĕр учреждени çирĕплеттермеле), 5) Çар служби тивĕçлĕхне кăтартакан документ (военнообйазаннăйсен).

Испытанисем 1938 çулхи августăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен пулаççĕ. Çак предметсемпе: вырăс чĕлхи, литературă, математикă, физикă, физикăлă географи тата обществоведени.

Испытанине чĕннĕ тăрăх çеç пымала, пĕрле паспăрт кирлĕ.

Студентсене вĕреннине кура стипенди параççĕ, общежити, столовăй, мунча, кĕпе-йĕм çумалли пур, выртса тăма матрас, одейал параççĕ.

Зайавленисене тата ыйтусене çак адрĕспе йамала: ст. Вурнары, ЧАССР, Зооветтехникум,

Дирекция.

3—3

КОЛХОЗСЕМПЕ ЙЕДИНОЛИЧНИКСЕН ХУÇАЛĂХĔСЕНЕ

Государствăна утă тăратмали договăр çинчи 11-мĕш пункт тăрăх, ОСТ-ăн 5749-мĕшĕ кăтартнипе, „ЧУВАШЗАГОТСЕНО" пунктисем 1938 çулта çулса илнĕ утăран кондицилисене çеç илеççĕ. Утă кондицийĕ çакăн пек пулмала:

I-мĕш ушкăнри—акнă курăксенути, чечеке ларнă чух йе чечеке ларас умĕн çулни, выртарса çĕртменни, йешĕл тĕсе тата шăрăшне çухатманни;

II-мĕш ушкăнри—çуркунне шыв илекен вырăнсенче ӳснĕ курăк ути, чечеке ларнă вăхăтра çулни, хăмăр тĕслĕ пулманни, йешĕл тĕсе тата шăрăша çухатманни. Хутăш урăх курăксем пулсан илмеççĕ.

III-мĕш ушкăнри—типĕ çаран ути, чечеке ларнă вăхăтра йе чечеке ларас умĕн пуçтарса кĕртни, хăмăр тĕслĕ пулманни, йешĕл тĕслисене; хутăш урăх тĕрлĕ курăксем пулсан илмеççĕ.

IV-мĕш ушкăнри—шыв илекен айлăм вырăнсенчи утă, чечеке ларнă вăхăтра çулнăскер тата йешĕл тĕслĕ пулмала.

Хăйаха, шурлăхри вакша курăкĕ, утхӳри, арăм ути тата выльăхсем çимен ытти тĕрлĕ курăксем хутăш пулсан—илмеççĕ.

Санитарипе ветеринари йенчен хăрушлăх çукки çинчен ветнадзор справкă памасăр леçнине йышăнмаççĕ.

Утă Хатĕрлевĕн Чăваш Кантурĕ.

2—2

Республикăра тухса тăракан журналсене çырăнса илĕр!

1938 çулти ийуль уйăхĕшĕн тата малалли уйăхсемшĕн подпискă илеççĕ.

Журналсен йачĕсем (чăвашла тухаççĕ)	Уйăхра миçе хут тухать	Çырăнса илмели хакĕ: 1 уйăха т.	1 уйăха п.	3 уйăха т.	3 уйăха п.	6 уйăха т.	6 уйăха п.
Ленин çулĕпе	2	—	50	1	50	3	—
Ĕçхĕрарăмĕ	1		50	1	50	3	—
Сунтал	1	1	—	3	—	6	—
Капкăн	2	—	40	1	20	2	40
Хатĕр пул	1	—	30	—	90	1	80

Подпискăна çыхăну предприйатийĕсем (почтăн хулари тата районри уйрăмĕсемпе агентствисем), почтальонсем тата предприйатисемпе учрежденисенче хаçат-журнал саракансем илеççĕ.

Ийуль уйăхĕшĕн подпискăна çак ийуль уйăхĕн 18-мĕш кунĕччен илеççĕ.

Сойузпичет.

2—1

Шупашкар торгĕ

Мĕн чул кирлĕ чухлĕ сутать:

Çĕрулми—килограмĕ 10 пус.
Хĕрлĕ-кăшман—килограмĕ 5 пус.
Çĕрулми—шăйрăлни—к-грамĕ 3 п.

Илес текенсен Чебторг кантурне пымала: ул. Кадыкова, 5-12.

Чебторг.

Йаланлăхах ĕçлеме кирлĕ:

Опытлă машинисткă,
Економистсем,
Ответисполнителсем,
Статистиксем.

Халăх Хуçалăх учечĕн управленийĕ.

Адрĕс: Шупашкар хули, Канаш урамĕ, 18. Телефон 2—15.

Куснарти шкул-интернатран тухса кайнă чĕлхесĕрсене шыраççĕ.
Тухса кайнă:
ГИЛĔВ ЙЕГОР—11 çулта,
НАУМĂВ ВИКА—16 çулта.

Вĕсем ăçтине пĕлекенсене çак адрĕспе пĕлтерме ыйтатпăр: Байгулово, Козловского района, Чувашская республиканская школа глухонемых.

Дирекция школы.

Выльăх тирĕсемпе шăрчĕ-çăмĕсене тытса усракан ГРАЖДĂНСЕМ!

Чĕрĕ тирсене килте ан усрăр, вĕсем пăсăлаççĕ те хакне çухатаççĕ.

Выльăх тирне сĕвнĕ хыççăн тӳрех „Тир хатĕрлев сойузĕн" тир пухаканĕсене, çавнашкалах потребителсен кооперацисене парăр.

Сысна тирне ĕнтме йе вĕри шывпа пĕçертме йурамасть — саккун чарать.

Вилнĕ выльăхсене, вĕсем йерекен чирпе чирлесе вилмен пулсан, тирĕсене сĕвмесĕр çĕре ан пытарăр, выльăх тирĕ промышлĕннăç валли хаклă сырйо.

Выльăха килте ан пусăр — выльăхсене пусмалли площадкăна илсе кайса пусăр. Площадкă çывăхра çук пулсан, йалти тир сĕвекен патне кайăр. Тир сĕвекен маçтăр тире тĕрĕс сĕвет тата пахалăхне хăварать.

Чĕрĕ тир панăшăн нормă тăрăх тивекен таварсене илĕр. Майракалă выльăхсемпе лаша тата качака тирĕсемшĕн—20 процент, сысна тирĕшĕн—40 процент (панă тиршĕн илмели тивĕçлĕ хакран шутласа) сăран таварсем параççĕ. Сурăх тирĕшĕн—сурт тăрăх шутлаççĕ, 2 дециметр чĕрĕ тиршĕн 1 дециметр тунă тир параççĕ.

Тир панăшăн малала пир-авăр таварĕсене тата ытти таварсене памаççĕ.

Сойуззаготкож.
Чувашсоюз.

Уполномоченный Чувашглавлита № 332
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 581.